26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ОКТЯБРЬ
1
ЭРНЕКУН
195(6432) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне КОНЕВА

Çĕçенхир фронтĕн çарĕсем виçĕ кун хушши хаяррăн çапăçнă хыççăн тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та паян, сентябрĕн 29-мĕшĕнче, нимĕçсен ДНЕПР шывĕн сулахай енчи кĕпер умĕнчи вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕ—КРЕМЕНЧУГ хулине йышăнса илнĕ.

КРЕМЕНЧУГ хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçнă чухне ЖАДОВ генерал-лейтенантăн, МАНАГАРОВ генерал-лейтенантăн çарĕсем тата авиаци генерал-лейтенанчĕн ГОРЮНОВАН летчикĕсем чапа тухнă.

Пуриншĕн те ытларах çаксем чапа тухнă: АНЦИФЕРОВ генерал-майорăн 97-мĕш гвардейски Полтавски стрелковăй дивизийĕ, СМИРНОВ полковникăн 6-мĕш гвардейски сывлăшри десант дивизийĕ, БРОВЧЕНКО полковникăн 214-мĕш стрелковăй дивизийĕ, СОКОЛОВ полковникăн 233-мĕш стрелковăй дивизийĕ, ХИЛОБОК подполковникăн 219-мĕш танковăй бригади, ЧЕРНЯВСКИЙ майорăн 469-мĕш минометнăй полкĕ, ГОЛЬДИН подполковникăн 308-мĕш гвардейски минометнăй полкĕ, ГРДЗЕЛИШВИЛИ подполковникăн 1902-мĕш хăй тĕллĕн çӳрекен артиллери полкĕ.

Туна çĕнтерӳсе ялланлăха палăртса хăварас тесе, КРЕМЕНЧУГ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче чапа тухнă соединенисемпе чăçсене „КРЕМЕНЧУГСКИ" тесе ят парас.

Малашне çав соединенисемпе чăçсене çапла чĕнмелле тăвас:

6-мĕш гвардейски Кременчугски сывлăшри десант дивизийĕ,
214-мĕш Кременчугски стрелковăй дивизи,
233-мĕш Кременчугски стрелковăй дивизи,
219-мĕш Кременчугски танковăй бригада,
469-мĕш Кременчугски минометнăй полк,
308-мĕш гвардейски Кременчугски минометнăй полк,
1902-мĕш Кременчугски хăй тĕллĕн çӳрекен артиллери полкĕ.

97-мĕш гвардейски Полтавски стрелковăй дивизие, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче иккĕмĕш хут чапа тухнăскере, ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе наградăлама тăратас.

Паян, сентябрĕн 29-мĕшĕнче, 23 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ КРЕМЕНЧУГ хулине ирĕке кăларнă хамăрăн паттăр çарсене çĕр çирĕм тăватă тупăпа вуниккĕ хут пĕр харăс персе Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ лайăх çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, КРЕМЕНЧУГ хулине ирĕке кăларнă чухнехи çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.
1943 çулхи сентябрĕн 29-мĕшĕ.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

1943 çулхи сентябрĕн 29-мĕшĕнче Калинин фронтĕн çарĕсем хаяррăн çапăçса тăшманăн Витебск енчи сулĕрĕсен вăйлă тĕреклетнĕ узелне—РУДНЯ хулине нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларчĕç.

РУДНЯ хулине ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче КВАШНИН генерал-майорăн 17-мĕш гвардейски Духовщински стрелковăй дивизийĕ, МАСЛОВ генерал-майорăн 19-мĕш гвардейски стрелковăй дивизийĕпе тата МИХАЙЛОВ подполковникăн 47-мĕш Духовщински механизированнăй бригади çапăçма вĕренсе çитнин тата маневрсем тума пĕлнин чи лайăх тĕслĕхĕсене кăтартса панă.

Туна çитĕнӳсене ялланлăха палăртса хăварас тесе, 17-мĕш гвардейски Духовщински стрелковăй дивизипе 47-мĕш Духовщински механизированнăй бригадăна, нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче иккĕмĕш хут чапа тухнăскерсене, ХĔРЛĔ ЯЛАВ орденĕпе наградăлама тăратас.

19-мĕш гвардейски стрелковăй дивизие „РУДНЕНСКИ" тесе ят парас, малашне ăна
19-мĕш гвардейски Рудненски стрелковăй дивизи тесе чĕнмелле тăвас.

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.
1943 çулхи сентябрĕн 29-мĕшĕ.

Комсомолецсемпе çамрăксен иккĕмĕш воскресникĕн итогĕсем

ВЛКСМ Обкомĕ йышăннă тăрăх, сентябрĕн 26-мĕшĕнче — республикăра государствăна тырă леçес тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен иккĕмĕш воскресникĕ пулса иртрĕ. Çав кун пĕтĕм республикăри колхозсем государство складне 28 пин центнера яхăн тĕштырă тата ытти ялхуçалăх продукчĕсене леçсе панă. Вăл шутра Хĕрлĕ Чутай районĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Ярадайкин юлташ) хĕрлĕ обозсем организацилесе 819 лавпа 2.417 центнер леçнĕ, Советски районĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Семенова юлташ) 600 лавпа 1.850 центнер тырă леçнĕ.

Анчах та хăшпĕр районсем çак воскресника начар хутшăннă. Улатăр районĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Ермакова юлташ) 300 центнер, Первомайски районĕ (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Никольева юлташ) 673 центнер кăна леçнĕ.

Кантăр татса пĕтерчĕ

ШАХАСАН. Калиновкăри Калинин ячĕпе тăракан колхоз кантăр татса пĕтерчĕ. Кăçал кантăр лайăх пулнă, 3 гектар çинчен 8.000 çурăм кантăр тата 2.600 çурăм пуçа пухса илчĕç. Халĕ кантăра пĕтĕмпех шыва хучĕç.

Çак кунсенче колхоз государствăна 70 килограмм сӳс кайса парĕ.

С. АСЛАН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

СЕНТЯБРĔН 29-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

ÇЕÇЕНХИР фронтĕнчи çарсем виçĕ кун хаяррăн çапăçнă хыççăн ДНЕПР шывĕ çинчи кĕперсем умĕнчи укреплениссенче тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та сентябрĕн 29-мĕшĕнче КРЕМЕНЧУГ хулине штурмласа тытса илнĕ.

КИЕВ енче пирĕн çарсем хаяррăн çапăçнă хыççăн ДАРНИЦА районĕнчи кĕпер умĕнчи укреплениссенче тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та, нимĕçсене ДНЕПР шывĕн сылтăм енне хăваласа ярса, ДАРНИЦА чугун çул узелне тата тăшманăн Днепр шывĕн сулахай хĕрринчи вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене — ТРОЕЩИНА, ВЫГУРОВЩИНА, ТРУХАНОВ ОСТРОВ, ПРЕДМОСТНАЯ СЛОБОДА, ПОЗДНЯКИ, ОСОКОРКИ ятлă пунктсене тытса илнĕ.

ГОМЕЛЬ енче пирĕн çарсем, наступлени туса пырса, уйрăм участоксенче 6 километртан пуçласа 10 километр таран малалла кусна, Гомель облаçĕнчи район центрне—ВЕТКА хулине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 170 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра САМОТЕВИЧИ, ПАПОРОТНАЯ, ВЯЖНОВКА, ЗАБОРЬЕ, МАКАРИЧИ, ШИРКИ, КАЗАЦКИЕ БОЛСУНЫ, ПЕРЕЛЕВКА, БОЛЬШИЕ НЕМКИ, МАЛЫЕ НЕМКИ, СТОЛБУН, ГРОМЫКИ, БАРТОЛОМЕЕВКА, БЕСЕДЬ, НОВОСЕЛКИ, БАДУГИ, ХАЛЬЧ, ДУБОВЫЙ ЛОГ, ЛЕОНТЬЕВО, ТАРАСОВКА ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

МОГИЛЕВ енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, 5 километртан пуçласа 10 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 370 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра ГОРСКАЯ СЛОБОДА, ВОЛЫНЦЕВО, ГОРЫ, ШАМОВО, НЕСТЕРЕВО, БЕЛЬ, ЛАРИЯНОВО, СЕЛЕЦ, КОРЕНЕЦ, БЕРЕЗОВКА, КРАСОВИЧИ, МАЛОЕ ЗАБЫЧАНЬЕ, НОРКИНО, ГАЛАЧЕВКА, ВЕТУХНА, КРАСНИЦЕ, РЕВЕНСК ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

ВИТЕБСК енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, РУДНЯ хулипе чугун çул станцине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан 120 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра СМОЛЕНСК облаçĕнчи ПОНИЗОВЬЕ ятлă район центрне тата МИКУЛИНО, БУТРОВО, СУТОКИ, ХЛЫСТОВКА, ЛЯДЫ ятлă пысăк пунктсене тытса илнĕ.

Сентябрĕн 28-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 46 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 52 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Çĕçенхир фронтĕнчи çарсем паян Кременчуг хулине штурмласа тытса илнĕ. Тăшман ку района резервсем илсе пынă та пĕтĕм вăйпа Днепр шывĕн сулахай енчи укреплениссене (кĕпер умĕнчи укреплениссене) хăй аллинчех тытса тăма тăрăшнă. Виçĕ кун хаяррăн çапăçнă хыççăн пирĕн çарсем нимĕçсем хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та Кременчуг хулине тытса илнĕ. Çĕмĕрсе тăкнă нимĕç çарĕсен юлашкийĕсене Днепр шывĕн леш енне хăваласа янă. Трофейăсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Витебск енче пирĕн çарсем, тăшман хаяррăн хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, Дарница чугун çул узелне тата Днепр шывĕн сулахай енчи вăйлă çирĕплетнĕ пунктсене чылайĕшне тытса илнĕ. Пирĕн çарсем тăшманăн çак районри кĕперсем умĕнчи укрепленийĕсене тытса илнĕ хыççăн Киев хули умĕнчех Днепр шывĕ патне пырса тухнă. Çĕмĕрсе тăкнă нимĕç çарĕсен юлашкийĕсене Днепр шывĕн сылтăм енне хăваласа янă. Тăшманăн Дарница районĕнчи кĕперсем умĕнчи укрепленийĕсене пĕтерессишĕн темисе кун хушши хаяррăн çапăçса, пирĕн çарсем тăшманăн 6.000 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 69 танк тата 78 тупă пĕтерсе тăкнă. Тупăсем, боеприпассем тата автомашинăсем нумай тытса илнĕ Тытса илнисем пур.

* * *

Гомель енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 170 пункта ытла тытса илнĕ. Советсен стрелковăй чаçĕсем танксем пулăшса пынипе питех те хăвăртăн малалла кусна та Гомель хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри Ветка хулине тытса илнĕ. Çав хулашăн çапăçнă чухне тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынтан кая мар вĕлерсе пĕтернĕ. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче тĕрлĕ калибрлă 15 тупă пур. Тепĕр участокра пĕр соединени боецĕсем çапăçса малалла куснă та Сож шывĕ патне пырса тухнă, халăх пурăнакан чылай пунктсене тытса илнĕ. Гитлеровецсене пĕр батальон ытла пĕтерсе тăкнă. Тытса илнисем пур. 10 бронемашина, 44 пулемет, 600 винтовкăпа автомат, боеприпассен складне тата 2 тырă складне тытса илнĕ.

* * *

Могилев енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 370 пункта ытла тытса илнĕ. Пĕр соединени чаçĕсем чылай вырăнсенче Вихра шывĕ урлă каçса кайнă. Тăшман çĕнĕ оборона рубежĕ çинче чарăнса тăма хăтланнă, анчах та пирĕн çăмăллăн куçса пыракан отрядсем нимĕçсене аркатса тăкнă та хĕвеланăçнелле хăваласа янă. Çав çапăçусенче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна çити пĕтерсе тăкнă. 200 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ. Пирĕн пĕр часть кăна 13 тупă, 124 пулемет, 300 винтовка, 12 тракторг-тягач тата 25 автомашина тытса илнĕ.

* * *

Витебск енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе, çаплах малалла тапăнса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем паян Рудня хулипе чугун çул станцине тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти пысăк пунктсене нумай йышăнса илнĕ. Кун каçиччен нимĕçсен 1.000 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче 12 тупă тата боеприпассен 2 склачĕ пур. Пирĕн тепĕр соединенин чаçĕсем, çулсене пăсса пăрахнă çумăрсене пăхмасăрах, тăшмана хĕвеланăçнелле хăваласа пынă, 10 километртан пуçласа 12 километр таран малалла куçнă. Тăшмантан йăккипе ирте-ирте кайса, пирĕн боецсем нимĕçсене çирĕплетнĕ рубежсенчен сирпĕте-сирпĕте кăларнă. Пĕр чаçри боецсем Смоленск облаçĕнче Березина шывĕ урлă каçнă та халăх пурăнакан чылай пунктсене тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 400 вилли ытла выртса юлнă. Нимĕçсен 2 артиллери батарейине, 7 миномечне, танксене пемелли 11 пăшалне тата боеприпассем тиенĕ 32 автомашинине тытса илнĕ. 50 гитлеровеца ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Çурçĕр фрончĕн летчикĕсем тăшман аэродромне ăнăçлăн тапăннă, унта çĕр çинче ларнă 20 самолета яхăн пĕтерсе тăкнă.

Хура тинĕс флочĕн авиацийĕ тăшманăн 8.000 тоннăллă транспортне, хăй тĕллĕн çӳрекен 5 баржине тата 2 катерне шыва путарнă

* * *

Ленинград облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ пĕр харăсах икĕ чугун çул разъездĕнчи хурала тапăннă. Партизансем нимĕç хуралне пĕтерсе тăкнă та 6 кĕпере, 4 çар складне сирпĕнтерсе янă тата 12.000 метр телеграфпа телефон линине çĕмĕрсе тăкнă. Ленинград облаçĕнчи тепĕр отрядри партизансем çĕрле чугун çул станцине вăркăнса кĕнĕ те нимĕçсен çар эшелонне çунтарса янă. Хаяррăн çапăçса, совет патриочĕсем çав станцире гитлеровецсене пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Аяларах Орел облаçĕнчи Брасовски районĕнчи Колошичи ялĕнчи Матрена Ивановна Коданова гражданка нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тунă тискер ĕç çинчен каласа панине пичетлетпĕр: «Хĕрлĕ Çар чаçĕсем пирĕн ял патнелле çывхарма пуçласан, нимĕçсем ялти мĕнпур халăха, персе пăрахассипе хăратса, халех ялтан хĕвеланăçнелле тухса кайма хушрĕç. Эпир пĕр ушкăн, 30 çын, нимĕçсем асăрхиччен вăрмана тарса кайрăмăр, вара унта нимĕçсенчен пытанса, Хĕрлĕ Çар килессе кĕтсе пурăнтăмăр. Темиçе кунтан нимĕç салтакĕсем пире курчĕç. Çав бандитсем никам хӳтĕлемен хĕрарăмсене, ачасене тата ватă çынсене пулеметпа пеме пуçларĕç. Эпĕ ӳкрĕм те вилнĕ пек пулса выртрăм. Çавăн чух гитлеровецсем 5 çулхи Мотя Чабановăна, 6 çулхи Нина Кодановăна, 3 çулхи Мария Кодановăна, 7 çулхи Василий Гурова, 8 çулхи Александр Гурова, 12 çулхи Вера Гуровăна, 17 çулхи Наталия Гуровăна, 80 çулхи Иван Гурова тата ыттисене те нумайĕшне персе вĕлерчĕç».

Информациллĕ пĕлтерӳ

1943 çулхи сентябрĕн 28—29-мĕшĕсенче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XVI-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ.

Пленум çук ыйтусене сӳтсе-яврĕ:

1. Ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕç мĕнле пулса пыни çинчен (докладчикĕ Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ Матвеев юлташ).

2. Çар çыннисен çемьисене пулăшу парасси çинчен (докладчикĕ ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Андреев юлташ).

Пленум сӳтсе-явнă пур ыйтусем тăрăх та тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Пленум М. А. Андреев юлташа ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕн ĕçĕнчен хăтарса, ВКП(б) Обкомĕн виççĕмĕш секретарĕ пулма, çавăн пекех тата И. К. Иванов юлташа ВКП(б) Обкомĕн пропагандăпа агитаци енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма çирĕплетрĕ.

Ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли мĕнпур плансене срокчен пурнăçа кĕртер

А. МАТВЕЕВ,

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателе

Тырпулсене пухса кĕртессипе ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси ялхуçалăх ĕçĕсен чи пысăк та ответлă тапхăрĕ пулса тăрать. СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ «1943 çулта тырпулсене пухса кĕртессипе ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленире—тырпула вăхăтра тата ăнăçлăн пухса кĕртесси, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли государство планĕсене пурнăçлассии нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çапса аркатас ĕçре совхозсемпе колхозсенчи, МТС-сенчи партипе совет тата комсомол организацийĕсен, МТС-семпе совхозсен работникĕсен вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи чи кирлĕ задачисенчен пĕри пулса тăрать тесе палăртрĕç.

Сталин юлташăн Хĕрлĕ Çар ăнăçлă наступлени туса пынине палăртакан приказĕсемпе хавхаланнă колхозниксемпе колхозницăсем, тăван çĕршыва фронт умĕнчи хăйсен пысăк тивĕçлĕхĕпе ответлăхне ăнланса илсе, вăя хĕрхенмесĕр, вăхăта шутласа тăмасăр ĕçлерĕç. Пирĕн республикăри нумай колхозсем тырпулсене çăннипех те вăрçă вăхăтĕнчи пек, хăвăрт та тăккаламасăр, организациленĕ пухса кĕртрĕç. Ĕçре тăван çĕршыва геройла хӳтĕлекенсенчен юлас мар тесе ĕçлесе, пиншер колхозниксем хăйсен патриотизмне кăтартса пачĕç. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн малтанхи итогĕсем тăрăх Чăваш республикине пĕтĕм ялхуçалăх тĕлĕшпе тата выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăратни колхозниксен, МТС-семпе совхозсенчи работниксен ĕçри хастарлăхне татах та хăватлăнрах ӳстерчĕ.

Ĕçхресченĕсем пĕтĕм чун-чĕререн хавхаланса ĕçленине пула республика кăçал уборка ĕçĕсен анлăшĕ ӳснĕ пулин те, çав ĕçсене пĕлтĕрхинчен организованнăрах ирттерме пултарчĕ. Сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне республикăри пур районсем те тырă вырса пĕтерчĕ, пĕлтĕр çав числа тĕлне тырра 97 процент чухлĕ кăна вырнă пулнă.

Уйрăм районсем—Кувакино, Пăрачкав, Чкаловски тата Улатăр районĕсем республикăна каялла туртса пыман пулсан, пирĕн республика тырпулсене татах та хăвăртрах вырса пĕтернĕ пулĕччĕ. Сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне 24 район тырпулсене пĕтĕмĕшпех вырса пĕтерне, çав вăхăтрах, Кувакино районĕнче 2.000 гектара çити, Пăрачкав районĕнче—3.600 гектара çити, Улатăр районĕнче—500 гектара çити, Чкаловски районра—900 гектара çити вырман тырă юлнă пулнă.

Сав районсем уборкăна вăраха янă пирки, тырпулсене нумай тăккаласа пĕтерчĕç. Халĕ вĕсем государствăна тырă парас ĕçе питех те тăсса пыраççĕ. Çав районсенчи райсовет исполкомĕсемпе парти райкомĕсем иртнĕ çулхи йăнăшсенчен хăйсем валли уроксем туман, уйхир ĕçĕсенче ĕç вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухман, пĕлтĕрхи йăнăшсене вĕсем кăçал тепĕр хут тăваççĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе парти Обкомĕ çав районсене, уйрăмăнах Кувакино тата Пăрачкав районĕсене, пулăшас тĕлĕшпе чылай мерăсем йышăнчĕç. Кувакино районне уборка пуçланас умĕн ытти районсенчен 250 яхăн лаша сутăн илме ирĕк панă, ытти МТС-сенчен 15 комбайн илсе вĕсен аллине панă. Ĕçре пулăшу парас шутпа ытти районсенчен çĕршер колхозниксене Кувакино районне янă. Çавăн пекех ĕçе организацилес тĕлĕшпе пулăшма ответлă работниксене яла чылай янă. Ытти районсене те çакăн пек пулăшу панă.

Анчах çапах та асăннă районсем ялхуçалăх ĕçĕсенче чылай енĕпе халĕ те юлса пыраççĕ. Вăл районсен руководителĕсем эпир паракан пулăшăва тĕрĕс мар ăнланаççĕ. Ларутăру çинчен колхозниксене тĕрĕс ăнлантарса парас, вĕсене тырпулсене ăнăçлăн пухса кĕртнĕ çĕре мобилизацилес вырăнне, кунти руководительсем хăйсен начар ĕçне районри йывăр условисемпе, лашасемпе çынсене ĕç нумай тивнипе тӳрре кăларма тытăннă. Колхозсенче ĕçе организацилес, мĕнпур ресурссемпе усă курас вырăнне, вĕсем аякран килсе пулăшасси çине ытларах шанма пуçланă.

Кувакинăпа Пăрачкав тата ытти хăшпĕр район руководителĕсем юлашкинчен çакна ăнланса илме тивĕçлĕ: вĕсем хăйсен колхозĕсенче йĕрке тăвас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмасан, ĕç дисциплинине тивĕçлĕ пек çирĕплетмесен, пĕтĕм районра, çавăн пекех кашни уйрăм колхозра ĕçе çирĕп организацилессишĕн çине тăрса тăрăшмалла, вĕсене аякран панă нимĕнле пулăшу та прорывран тухма май параймасть. Лашапа кашни уйрăм çын пуçне мĕн чухлĕ ĕç тивнине илсен, ку тĕлĕшпе республикăра çав районсемпе пĕртан тăракан районсем сахал мар, анчах вĕсем никам пулăшмасăрах хăйсен ĕçне ăнăçлăн туса пыраççĕ.

Кая юлакан районсен хăшпĕр руководителĕсем хăйсен районĕсен кун-сулĕшĕн ответлăха туймаççĕ. Район кая юлни вĕсене пăшăрхантармасть. Хăшпĕр руководительсем хăйсене иртнĕ вăхăтра тунă çитĕнӳсемпе лăплантараççĕ, халĕ хăйсен районĕ кая юлнине курмаççĕ, ĕçе юсаса ярас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Тăвай райкомĕн секретарĕ пулнă Салмин юлташпа ĕç çавăн пек пулса тăнă та ĕнтĕ. Вăл хăйĕн районĕнче кĕске вăхăтра тунă хăшпĕр çитĕнӳсемпе лăплансa ларнă та, район тырă вырас, кĕлте турттарас капана хывас, государствăна тырă парас тĕлĕшпе тӳсме çук кая юлнине курсан, çакăн пирки ăна темиçе хутчен те асăрхаттарнă пулин те, вăл ĕçе юсама тăрăшмарĕ.

Пирĕн тата хăйсен ĕçĕнчи ситменлĕхсене районăн «уйрăм йывăрлăхĕсемпе» ăнлантарса парса, çав ситменлĕхсем çине лăпкăн пăхса ларакан руководительсем те пур-ха. Ĕс çине Улатăр районĕн руководителĕсем савнăшкал пăхаççĕ те ĕнтĕ. Ку районăн пĕтĕм ялхуçалăх ĕçĕсене ытти районсемпе танах туса пыма пур майсем те çителĕклĕ, çакăнпа пĕрлех, уборка вăхăтĕнче района хула сахал мар пулăшнă. Анчах мĕн курăттăр-ха эпир? Район республикăри ытти районсенчен 5—6 кун каярах юлса тырă вырса пĕтерчĕ. Кĕрхи тырăсем акмалли плана сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне район 88,5 процент кăна пурнăçланă. Районра вырăнтах заготзерно пункчĕ пур пулин те, колхозсем тырă турттарнă çĕрте шыв транспорчĕпе те усă курма пултараççĕ пулин те, государствăна тырă парас ĕç питех те кая юлса пырать. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ Улатăр район руководителĕсен ĕçне пăхса тухса сивлерĕ, вĕсем пирки çирĕп решени йышăнчĕ.

Çав районсем кая юлнин тĕп сăлтавĕсем çаксем пулса тăраççĕ: асăннă районсенче халăх хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçе пачах та çителĕксĕр организациленĕ, парти организацийĕсем массăсене ертсе, организацилесе пымаççĕ, вĕсем политикăллă ĕçе хуçалăх задачисене пурнăçа кĕртессипе çыхăнтарса пыма пĕлмеççĕ, халăх хушшинчи агитациллĕ ĕçе çиелтен, формăшĕн кăна туса пыраççĕ, колхозсенчи ĕç дисциплинине япăхтарса янă, юлашкинчен тата кая юлакан колхозсене

(Вĕçĕ 2-мĕш страницăра)

Ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли мĕнпур плансене срокчен пурнăçа кĕртер

А. МАТВЕЕВ,

Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ

ЮЛАШКИ

районсене партипе совет тата çĕрĕç органĕсем пачах та çителĕксĕр пулăшса пырассĕ.

Республикăра авăн çапас ĕç вăраххăн пырать. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне авăна пĕтĕмпе те 60,6 процент чухлĕ кăна çапса пуснă. Ку тĕлĕшпе пирĕн [illegible] икĕ çулхи опыт пур, иртнĕ çулсенче авăн вăрахра çапнă пирки государства тырă парас ĕçе тăсса пынă, уйăх районсене (Елчĕк, Чкаловски) [illegible] çĕнĕ тырăсем çапнă.

Партипе совет организацийĕсен хăш-хăш районсенче авăн çапса пĕтерес, государствăна срокчен тырă, çĕрулми, пахча-çимĕçсем, техникăллă культурăсем парса татас, [illegible] ĕçсене пурнăçа кĕртес, выльăх-чĕрлĕх [illegible] хатĕрлес ĕçсем çине уйăрах тимлĕ çаврăнса пăхмалла.

Колхозсемпе халĕ мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене фронтри пек [illegible] государство ялхуçалăх продукчĕсем [illegible] Пĕтĕм Союзри социализмлă [illegible] задача урăх çук та. Тырăпулсене срокчен парса [illegible] республика [illegible] Оборона Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илес тивĕçе те çухатма пултарать.

Государствăна тырă тата ытти тĕрлĕ ялхуçалăх продукчĕсем парас ĕçĕн хăвăртлăхне халĕ ниепле те çителĕклĕ тесе шутлама çук. Чăн та, тырă парас ĕç иртнĕ çулхинчен ăнăçлăнрах пулса пырать, анчах вăрçăччен 1940 çулпа танлаштарсан, эпир çак ĕçĕн хăвăртлăхне чылай чакарнă. 1940 çулхи сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана 66,0 процент тултарнă пулсан, кăçалхи çул вара çав кун тĕлне плана 60,6 процент кăна пурнăçланă.

Правительство кăтартнă сроксем тăрăх сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тырă памалли çулталăкри плана 25 процент тултармалла пулнă пулсан, эпир тĕрĕссипе çав кун тĕлне 20,2 процент кăна пурнăçланă. Халĕ кăна ĕнтĕ республика çирĕплетнĕ графика пурнăçа кĕртсе пыра пуçларĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă хăйсен постановленийĕсенчен пĕринче колхозсемпе совхозсенче тырпулсене пухса кĕртнĕ чухне питĕ тăккаланы çинчен, тырпула нумай çаратса пĕтерни çинчен асăрхаттарнăччĕ. Çавăн пек тăккалани тата çаратни вăл тăван çĕршывăн продовольстви запасĕсене чакарать. Государствăна хирĕçле çав практикăна тăван çĕршывăн оборона тĕрекне хавшатни вырăнне хурса, СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ районсенчи партипе совет организацийĕсен руководителĕсене, колхозсемпе совхозсен руководителĕсене çакăн пирки асăрхаттарчĕ: вĕсем тырпулсене пухса кĕртнĕ чухне тырă тăккаланнине пĕтермеççĕ пулсан, государствăна тырă парассине чарса тăраççĕ пулсан, тырпула тăккалание вăрланине хирĕç мерăсем йышăнмаççĕ пулсан, çавăн пек çынсене вырăнтан кăлараççĕ, партирен кăлараççĕ, вĕсене, государствăна сиен кӳрекен тата тăван çĕршыв оборонин тĕрекне хавшатакан çынсем вырăнне хурса, суд аллине параççĕ.

Çакăн пек çирĕп асăрхаттарнă хыççăн, районсен руководителĕсем тырпула тăккалама парас марришĕн тата государствăна тырă парас ĕçĕн хăвăртлăхне татăклăн ӳстерессишĕн кирлĕ мерăсене пурне те йышăнмалла пек ĕнтĕ. Анчах та хăшпĕр руководительсем партипе правительство асăрхаттарнине çине тӳсме çук сӳрĕккĕн çаврăнса пăхрĕç, вĕсем государствăна тырă парас ĕçе халиччене кая хăварса пыраççĕ. Çапла ĕнтĕ сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă памалли плана пĕтĕм республикипе 60,6 процент, Пăрачкав районĕ вара 23,8 процент, Шăмăршă—26,3 процент, Куракино—33,8 процент, Елчĕк—40,0 процент, Первомайски—35,9 процент, Чкаловски—30,8 процент, Хĕрлĕ Чутай—51,9 процент тата Комсомольски—53,3 процент кăна тултарнă. Кая юлакан районсем государствăна тырă парас ĕçе малта пыракан—Вăрнар, Етĕрне, Сĕнтĕрвăрри, Советски районсем пекех ăнăçлăн туса пыма пултараççĕ. Анчах çав кая юлнă районсен руководителĕсем тăван çĕршывпа фронт умĕнчи ответлăха туймаççĕ, вĕсем тӳсме çук сӳрĕк ĕçлеççĕ.

Вĕсем СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен йышăннă постановлениене пурнăçламаççĕ. Вĕсем çапнă тырра молотилка айĕнчен тӳрех государствăна парассине организацилемен, тырă турттаракан транспорт бригадисене формишĕн кăна тунă. Колхозсем пилĕккунлăх задачисене мĕнле тултарса пынине вĕсем куллен тĕрĕслесе тăмаççĕ.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Прогресс» колхозра тырă турттаракан бригадăна 12 лаша уйăрса панă. Анчах тĕрĕссипе кунта транспорт бригади çук, мĕншĕн тесен лашасене урăх çĕрте ĕçлеттереççĕ. Август уйăхĕнче колхоз тырă 10 центнер кăна панă. Сентябрь уйăхĕнче план тăрăх Заготзерно пунктне тырă 12 хутчен турттарса кайса вырăнне, 8 хутчен кăна кайнă. Çавна пула колхоз тырă памалли плана сентябрĕн 16-мĕшĕнче 32 процент кăна пурнăçланă.

Çакăн пек йĕркене çак районри ытти колхозсенче те курма пулать, анчах ун çине никам та çаврăнса пăхмасть.

Хĕрлĕ Чутай районĕн государствăна тырă памалли графика пурнăçа кĕртсе пыма кăна мар, ирттерсе тултарма та майсем пур. Лашасем кунта çителĕклĕ, ытти районсемпе танлаштарсан лаша пуçне ĕç те ытлашши нумай тивмест. Анчах райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕ çак ĕçе кирлĕ пек тытăнман-ха, колхозсемпе ялсовет руководителĕсен дисциплинине çирĕплетмен, вĕсенчен тырă памалли графика пĕр пăркаланмасăр тата вăхăтра пурнăçа кĕртсе пыма ыйтмаççĕ.

Хăшпĕр районсен руководителĕсем колхозниксене авансла тырă панă çĕрте тата колхозăн шалти нушисем валли тырă расходланă çĕрте закона пăснине хирĕç тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Закона çавăн пек пăснисене, ялан тенĕ пекех, государствăна тырă парас ĕçре кая юлса пыракан районсенче курма пулать. Çапла, сăмахран, Елчĕк районĕнчи чылай колхозсенче («Новая волна», «Авангард», «Малалла» тата ыт. те) колхозсен шалти нушисем валли тĕштырă государствăна панинчен 100 процент ытларах та расходласа пĕтернĕ. Закона пăсакансене айăпламаççĕ. Çавăн пек государствăна хирĕçле ĕçе пĕтермелле. Тырпула салатса пĕтерессине хирĕç хыттăн кĕрешмелле, айăплисене çирĕп ответ тыттармалла.

МТС-сем ĕçленĕшĕн натуроплата тӳлес ĕç те пачах çителĕксĕр пулса пырать. СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ йышăннă тăрăх, заготзерно пунктне панă тĕштырăран çуррине натуроплата шутне, тепĕр çуррине обязательнăй йĕркепе памалли шута кĕртмелле. Çак кăтартăва заготзерно пункчĕсем, райуполнаркомзагсем тата колхозсен руководителĕсем пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне государствăна обязательнăй йĕркепе тĕштырă памалли плана 75,0 процент тултарнă, натуроплата тӳлемелли плана вара 47,1 процент кăна пурнăçланă. МТС директорĕсем тата Çĕрĕç халăх комиссарĕ Малов юлташ натуроплата тыррине йĕркеллĕн илсе пырас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнман, ку енĕпе çирĕп контроль туман, вĕсем çак ĕç хăй тĕллĕн пулса пырассине шаннă. Натуроплата тыррине парас тĕлĕшпе уйрăмах çак районсем кая юлса пыраççĕ: Елчĕк районĕ ку енĕпе плана 24,8 процент, Пăрачкав—14,5 процент, Чкаловски—17,6 процент, Шăмăршă—15,5 процент чухлĕ кăна тултарнă.

Единоличник хуçалăхĕсем государствăна тырă памалли обязательствăсене тӳсме çук япăх пурнăçласа пыраççĕ. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне ку енĕпе плана 13,0 процент чухлĕ кăна тултарнă. Улатăр, Элĕк, Куславкка, Красноармейски, Етĕрне районĕсенчи единоличниксем государствăна тырă пама паянхи кунччен те тытăнман-ха. Единоличниксем çавăн пек юлса пынине пĕтермелле, вĕсене государство умĕнчи парăмсене пĕтĕмĕшпех тата вăхăтра таттармалла, çак ĕçрен пăрăнакансенчен тырă закон тăрăх шыраса илмелле.

Тырă парас ĕçĕн хăвăртлăхне ӳстерес тĕлĕшпе çирĕп мерăсем йышăнмалла, лайăх вăхăтна туллин усă курса юлмалла. Çăмăрсем пуçлансан çулсем пăсăлаççĕ те тырă турттарма лашасем ытларах кирлĕ пулаççĕ, тырă та вара нӳрĕ пулать. Тырă турттарнă çĕре туртăм вăйĕн 40 процентĕнчен кая мар уйăрмалла.

Заготзерно пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтра хатĕрлев пункчĕсене тасамар тата нӳрĕ тĕштырăсем нумай илсе пыра пуçларĕç, çакă вăл хатĕрлев пункчĕсене пысăк чăрмавсем кӳрет. Кун пек фактсем Шупашкар, Ишлей тата Сĕнтĕр районĕсенче уйрăмах палăраççĕ. Çак йĕркесĕрлĕхе пĕтермелле. Çавăн пекех тата хатĕрлев пункчĕсенчи работниксем тĕштырра тивĕçлĕ сăлтавсемсĕрех каялла тавăрса парассине те пĕтермелле, тырпула хăвăрт йышăнмалла, квитанцисем çырса парассине тăсмалла мар. Заготзерно пункчĕсене кăтартуллă ĕçлеттермелле.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ пирĕн республика авăн çапас тата государствăна тырă парас тĕлĕшпе кая юлнине кăтартса пачĕç, çакă питех те кирлĕ ĕç çине сӳрĕккĕн, ответлăхсăр пăхнине тăван çĕршывăн оборона тĕрекне хавшатни вырăнне хурса хаклассине çинчен асăрхаттарчĕç тата авăна кăçалхи октябрĕн 20-мĕшĕнчен кая юлмасăр çапса пĕтерме хушрĕç. Кăтартнă срокра авăна пур колхозсенче те çапса пĕтерес тесе, партипе совет тата çĕрĕç органĕсен мĕн кирлине пурне те тумалла.

Совнаркомпа парти Обкомĕ сентябрĕн 25-мĕшĕпе октябрĕн 25-мĕшĕ хушшинче мĕнпур ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлес тĕлĕшпе уйăхлăх ирттерме йышăнчĕç. Уйăхлăха колхозниксен мĕнпур массине явăçтармалла, уйăхлăх вăхăтĕнче авăна пĕтĕмĕшпех çапса пĕтермелле, кĕрхи çĕртме туса пĕтермелле, государствăна тырăпа ытти продуктсем парса татмалла, выльăхсене ăшă çĕрте, тутă хĕл кăларма хатĕрленсе çитмелле, çак ĕçсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесен ĕç вăйĕпе туртăм вăйне тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла.

Хĕрлĕ Çара, çавăн пекех çĕршыври халăха апат-çимĕç парса тăрас ĕçре çĕрулмипе пахча-çимĕçсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çĕрулмипе пахча-çимĕçсем парас тĕлĕшпе питĕ çирĕп сроксем тунă.

Анчах çĕрулми кăларассипе пахча-çимĕçсем пухас ĕçсем питех те вăраххăн пулса пыраççĕ-ха. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне çĕрулмине 57,0 процент кăна кăларнă, иртнĕ çул çав вăхăт тĕлнех 79,5 процент кăларнă пулнă. Çĕрулмине уйрăмах Куракино, Пăрачкав, Первомайски тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенче вăраххăн кăлараççĕ.

Çĕрулмипе пахча-çимĕçсем типĕтсе хатĕрлес ĕç çине тимлĕн çаврăнса пăхас пулать. Республика Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ районсемпе колхозсенче тата типĕтмелли предприятисенче мĕн чухлĕ çĕрулмипе пахча-çимĕçсем типĕтсе хатĕрлемеллине план туса çирĕплетнĕ. Анчах райсоветсен исполкомĕсем нумайĕшĕсем çав решенисем çине формально пăхаççĕ, типĕтмелли предприятисене лашасем уйăрса паман, вутă турттарса паман. Хĕрлĕ Чутай, Канаш, Çĕмĕрле тата ытти районсенчи сушилкăсем ĕçлемеççĕ. Нумай районсенче пахча-çимĕçсем типĕтес ĕçе колхозсенче организацилемен. Республика Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ пахча-çимĕçсемпе çĕрулми типĕтмелли плана кирек мĕнле условисенче те пурнăçа кĕртме хушаççĕ. Çавăн пекех тата хăярпа купăста йӳçĕтсе тăварламалли плана та пурнăçа кĕртмелле. Çĕрулми, купăста, хăяр—вĕсем пурте фронта каяççĕ. Фронт ыйтни—пирĕншĕн закон, ăна пирĕн пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртмелле.

Районсенче техникăллă культурăсем çине çителĕксĕр çаврăнса пăхни сисĕнет. Çав культурăсем—йĕтĕнкантăрсем оборона ĕçĕнче питех те кирлĕ. Анчах чылай районсенче, уйрăмах Куракино, Пăрачкав, Улатăр, Чкаловски, Елчĕк районĕсенче, йĕтĕн-кантăрсене иртнĕ çул шыва хуттса пултармасăр нумай хăварнă. Çавăн пек типтерсĕр тыткаланине пула нумай колхозсенче йĕтĕн-кантăр ахалех пĕтнĕ.

Техникăллă культурăсем çине тимсĕр пăхни уйрăм районсенче кăçалхи çул та палăрать. Йĕтĕне халиччен те татса пĕтермен, кантăра çурри кăна татнă. Йĕтĕн-кантăра çерем çине сарса е шыва хутса пултарас ĕç татах та япăхрах пырать.

Йĕтĕн-кантăрсене халех татса кĕрес тĕлĕшпе райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсен çирĕп мерăсем йышăнмалла. Йĕтĕне октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр çерем çине сарса пăрахмалла, кантăра—октябрĕн 10-мĕшĕччен шыва хутмалла. Государствăна техникăллă культурăсем памалли задание пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртмелле.

Вăрçă кунĕсенче махорка питех те пысăк вырăн йышăнса тăма пуçларĕ. Анчах хăшпĕр районсемпе колхозсен руководителĕсем махорка хатĕрлевне тивĕçлипе хакламаççĕ. Чăн та, республикăра махоркăна касса пуçтарнă, анчах ăна тирпейлесе хатĕрлев пункчĕсене парасси тӳсме çук вăраххăн пулса пырать. Çак ĕçе пирĕн çирĕп контроллесе тămalla. Октябрь уйăхĕнче кирек мĕнле пулсан та государствăна махорка парса татмалла.

Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕç пачах та çителĕксĕр пырать. ВКП(б) Обкомĕн XV-мĕш пленумĕ Уполнаркомзага, райсоветсен исполкомĕсемпе, ВКП(б) райкомĕсене выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем хатĕрлес ĕçе вăйлатма хушрĕ. Çакăн пек кăтарту панă пулин те, республика тăрăх государство хатĕрлевĕсен планне пĕр выльăх-чĕрлĕх продукчĕ енĕпе те тултарман. Государствăна ашкакай памалли плана сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпе 67,0 процент кăна тултарнă, колхозсем вара 99,0 процент пурнăçланă. Сĕт памалли плана 67,3 процент, чăкăт-брынза планне—13,9 процент кăна пурнăçланă. Сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 28 районран государствăна аш памалли плана 16 район тултарнă. Куславкка, Çĕмĕрле, Пăрачкав тата Куракино районĕсенчи колхозсем ашкакай уйрăмах сахал панă. Çавăн пекех ку ĕç Канаш районĕнче те питĕ япăх пырать.

Чăвашпотребсоюз аш-какайлăх кайăк-кĕшĕк хатĕрлес тĕлĕшпе начар ĕçлет.

Республикăри пĕр район та сĕт хатĕрлемелли плана пурнăçламанни уйрăмах шухăшлаттарать, мĕншĕн тесен ĕнесем сĕт нумай парас вăхăт иртсе кайрĕ.

Брынза тума сурăх сĕчĕ парас ĕç те тӳсме çук япăх пулса пырать. Ялхуçалăхĕнчи нумай специалистсем, çавăн пекех тата Наркомземпа Чăвашмаслопром аппарачĕсем те çак питех те кирлĕ ĕçе колхозсенче организацилемерĕç. Хăшпĕр заводсенче (сăмахран, Шăмăршăра) илсе пыракан сурăх сĕтне ĕне сĕчĕпе хутăштарса яраççĕ те брынза тумаççĕ.

Районсенчи партипе совет организацийĕсем, çавăн пекех тата Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн районсенчи уполномоченнăйĕсем выльăх-чĕрлĕх чĕртаварĕ хатĕрлес ĕçсене кайри вырăна хураççĕ. Государствăна çăм, тир-сăран парасси тӳсме çук япăх пырать. Ку тĕлĕшпе ĕçе юсамалла. Выльăх-чĕрлĕх чĕртаварĕсем хатĕрлемелли плана çывăх вăхăтсенчех тултарас пулать.

Ялхуçалăх çулĕ вĕçленсе пырать. Хĕрӳллĕ ĕçĕн вĕçлемелли татăклă кунĕсем çитрĕç. Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, çуркуннепе çуллахи вăхăтра вăрçă кунĕсене тивĕçлĕ пек ĕçлерĕç. Халĕ ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлессишĕн мĕнпур вăя хумалла, государство умĕнчи обязательствăсене пурне те чыслăн пурнăçламалла.

Геройла Хĕрлĕ Çар ăнăçлă наступлени туса пынипе хавхаланнă колхозниксемпе колхозницăсем ялхуçалăх умĕнче тăракан мĕнпур задачăсене чыслăн пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешеççĕ. Эпир çав задачăсене вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек пурнăçлама, çапла вара пирĕн республикăри ĕçсыннисем 1943 çулта илнĕ обязательствăсене пурнăçлани çинчен Сталин юлташа чыслăн рапорт пама пултаратпăр.

Сĕнтĕр районĕнчи колхозсен обязательстви

СĔНТĔР, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Кунта ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлес, государствăна тырпулсем памалли плана срокчен тултарас тата колхозсенчи фермăсене хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе фронтовой уйăхлăх ирттересси çинчен Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ йышăннă постановление сӳтсе явмашкăн подрайонсенче ялсоветсемпе колхозсен председателĕсен тата пуçламăш парторганизаци секретарĕсен канашлăвĕсем пулса иртрĕç. Канашлусенче çак кунсенче тумалли ĕçсем çинчен сӳтсе явса, татăклă обязательствăсем илчĕç.

Государствăна тырă памалли плана октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тата çĕрулмипе пахча-çимĕçсем памалли плана октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне тултарма палăртрĕç. Авăн çапас, государствăна кантăр вăрри парас ĕçсене октябрĕн 10-мĕшĕччен туса çитерме йышăнчĕç.

Халĕ районри кашни колхозрах çав обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса пырать

Ĕç тухăçлăхĕпе пахалăхĕшĕн кĕрешмеççĕ

ПЕРВОМАЙСКОЕ. «Красное Именево» колхоз (председателĕ Кузьмина) чылай вăхăтранпа авăн çапать, анчах авăн çапмалли графика нихăш кун та пурнăçласа пырай-масть. Кунта кунĕн-çĕрĕн авăн çапас вырăнне, ирхине 10 сехетре çеç ĕçе тытăнаççĕ.

Çак колхоза авăн çапассине хăвăртлатма МТС молотилка янă. Молотилка кашни кун тенĕ пекех ĕçлемесĕр ларать.

Кĕлте кӳнĕ çĕрте çĕмел вырăнĕсенче пучах нумай тăккаланса юлать. Хăшпĕр чух çул çине те кĕлтесем ӳкерсе хăвараççĕ. **В. ДАВЫДОВ.**

СОВЕТ СОЮЗĔ ТĂРĂХ

Ирĕке кăларнă Харьковра

Совет çарĕсем Украинăн иккĕмĕш столицине ирĕке кăларнăранпа уйăх тултарать ĕнтĕ.

Харьковри халăх хăйĕн тăван хулине юсас тĕлĕшпе çав тери хавасланса ĕçлет. Нимĕçсем сирпĕнтерсе хăварнă кĕперсене юсаса пĕтернĕ, трамвая хута ярас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Аш-какай комбиначĕн темиçе цехĕ ĕçлеме пуçланă ĕнтĕ, çавăн пекех тата çăкăр завочĕ, столовăйсем, çăкăр магазинĕсемпе пахча-çимĕç магазинĕсем те ĕçлеççĕ. 17 больницăна, 25 амбулаторие, ачасен 8 яслине юсаса пĕтернĕ, вĕсем ĕçлеме пуçланă ĕнтĕ.

Харьковри университета 200 студент пырса çырăннă, вĕсем оккупаци пирки вĕренме пăрахнă пулнă, халĕ малалла вĕренесшĕн. Университет тата çĕнĕрен студентсем илме пуçланă. Наукăпа тĕпчев институчĕсем те ĕçлеме пуçланă. Икĕ ремесла училищипе пĕр ФЗО шкулĕпе вĕрентме пуçланă. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тата 10 ремесла училищипе 5 ФЗО шкулĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

Чугун çулсем тăрăх поездсем çӳрес ĕç йĕркеленсе çитет. Мускавпа Харьков хушшинче пассажирски поездсем расписани тăрăх çӳреççĕ.

Октябрь уявĕ тĕлне хулари урамсенче, шыв хĕррисенче тата скверсенче акацисем, каштансем, çăкасем тата тĕрлĕрен фрукт йывăççисем нумай лартса тухаççĕ. (ТАСС).

Миллион çурă ача пионер лагерĕсемпе çуллахи площадкăсенче каннă

Пионерсемпе шкул ачисен канмалли вăхăчĕ пĕтрĕ. Миллион çурă ача Мускав çывăхĕнчи вăрмансенче, Кавказ тăвĕсем умĕнче, Алтайри, Уралти, Вăтам Азири питĕ илемлĕ вырăнсенче пионер лагерĕсемпе ача площадкисенче пулнă.

200 пин ача санатори йышши лагерьсемпе площадкăсенче каннă. Çавăнта санаторисенчи пек режим тунă. Вĕсенче ачасем, уйăх çурă каннă. Унта вĕсем тĕрекленнĕ, вĕсен йывăрĕшĕ вăтамран 3—5 килограмм хушăннă.

Рабочи снабжени отделĕсем пионер лагерĕсемпе площадкисем валли тĕрлĕ продуктсем—пахча-çимĕçсем, сĕт т. ыт. те хушса панă. Ачасенчен нумайĕшĕ ялхуçалăхĕнче ĕçленĕ, имçам ӳсентăрансем, кăмпасем пухнă.

Ачасем çĕнĕ вăйпа вĕренме тытăнчĕç. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: 8-мĕш арми çаплах Сфанто шывĕнчен çурçĕрелле куçса пырать. Союзниксен çарĕсем Фоджа хулине тытса илнĕ. Тăшмана питĕ йывăр çухатусем кӳнĕ. Çавăн пекех 5-мĕш арми те, малалла куçса, çĕнĕ позицисем тытса илнĕ.

Рейтер агентствин союзниксен Çурçĕр Африкăри штабĕ çумĕнчи специальнăй корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем Салерно хулинчен хĕвелтухăçнерехре ларакан Лиони хулине тытса илнĕ. Çавăн пекех тата американецсен Салерно фронтĕнче кĕрешекен чаçĕсем Кастельнуова хулине тытса илнĕ.

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). США-н çар министерстви çапла пĕлтернĕ: сентябрĕн 16-мĕшĕччен Салерно фронтĕнчи çапăçусенче американецсен, вилнисемпе аманнисене тата пĕр хыпарсăр çухалнисене те шутласан, 3.497 çын пĕтнĕ. Пĕлтерӳре çакна уйрăмах палăртса каланă: ку шута сентябрĕн 14-мĕшĕнче пулнă çухатусем те кĕреççĕ. Нимĕçсем американецсен ку кунхи çухатăвĕсем çинчен çапла пĕлтернĕ пулнă: американецсене сентябрĕн 14-мĕшĕнче 8 пин çынтан пуçласа 10 пин çын таран вĕлернĕ тата çавăн чухлех тыткăна илнĕ, тенĕ пулнă.

ГРАЦИАНИ МАРШАЛА ТАПĂННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Швейцарире çакăн пек хыпар илнĕ: сентябрĕн 25-мĕшĕнче Грациани маршала тапăннă. Грациани Муссолини тунă пуканелле «правительствăра» «оборона министрĕ» пулса ĕçлет. Фашистла влаçсем нумай çынна тытса хупнă. Анчах та Грациани маршала тапăнакансене никама та тупайман.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: американецсен «Вĕçекен крепость» йышши самолечĕсен пысăк соединенийĕсем сентябрĕн 27-мĕшĕнче Эмденри порт сооруженийĕсемпе Рурихри (Рур облаçĕ) объектсене атакăланă. «Вĕçекен крепоçсене» акăлчансен истребительнăй авиацийĕн самолечĕсем хӳтĕлесе пынă.

Американецсен бомбардировщикĕсем Эмденри подводнăй лодкăсен бази çине 1.000 тонна бомба пăрахнă.

Сентябрĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен авиацийĕ Ганновер хулине атакăланă. Унсăр пуçне тата Брауншвейгпа Эмден çине бомбăсем пăрахнă.

ЮГОСЛАВИ КОРОЛĔПЕ ПРАВИТЕЛЬСТВО ЧЛЕНĔСЕМ ÇЫВĂХРИ ХĔВЕЛТУХĂÇНЕ ТУХСА КАЙНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Югослави королĕ Петр Англирен Çывăхри Хĕвелтухăçне тухса кайнă. Унпа пĕрле правительство членĕсем тата штаб членĕсем те кайнă.

АРДЕНН ВĂРМАНĔНЧЕ БЕЛЬГИ ПАРТИЗАНĔСЕН ОТРЯЧĔСЕМ КĔРЕШЕÇÇĔ

ЛОНДОН, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Бельгиецсен никама пăхăнмасăр ĕçлесе тăракан телеграф агентстви çапла пĕлтерет: Бельгири Арденн вăрманĕнче хĕçпăшаллă партизансен отрячĕсем кĕрешеççĕ. Отрядсенче пуринчен ытла Бельги рабочийĕсемпе студентсем тăраççĕ. Вĕсем—Германири ирĕксĕр ĕçе мобилизацилесе ярасран вăрмана тарса кайнăскерсем. Партизансем автоматсемпе, винтовкăсемпе тата револьверсемпе хĕçпăшалланнă. Ялсенчи халăх партизансене кăмăлласа пулăшать, апат-çимĕç тата тумтир тавраш те парса тăрать.

ГЕРМАНИ МОРЯКĔСЕМ ХУМХАННИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Стокгольмри специальнăй корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Германин Норвегири Альтенфиорд портĕнче тăракан «Тирпиц», «Шарнхорст» тата «Лютцов» линкорĕсен командисем хăйсен карапĕсене сиенленĕ.

Çав линкорсен экипажĕсем хумханни вĕсен карапĕсене командовани Атлантика океанĕнчи суднăсен караванĕсемпе çапăçма ярасшăн тенине илтнĕ хыççăн вăйланса кайнă. Çавăн пекех тата Итали флочĕ парăнни те нимĕç морякĕсен шухăш-кăмăлĕсене пăсса янă.

ГЕРМАНИН ÇАР ХАТĔРĔСЕНЕ ШВЕЦИ УРЛĂ ТУРТТАРСА ТĂРАÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Чикаго дейли ньюс» ятлă хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Швецин тавар турттаракан поезчĕсем Германин тĕрлĕ материалĕсене турттарса çӳреççĕ, вăл шутра продовольстви, бензин, машина пайĕсем, станоксем, нефть, йĕплĕ пралук, йĕлтĕрсем тата Норвегин çурçĕр пайĕнче тăракан Германи чаçĕсем валли казармăсем те турттараççĕ. Çаксене Норвегири пулăçсем валли турттаратпăр тесе турттараççĕ. Тавар турттаракан виçĕ поезд кашни кун бензин кăна турттараççĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

ГЛАВАВТОТРАКТОРОСБЫТĂН ЧĂВАШ КОНТОРИ пур клиентсене те çакăн çинчен пĕлтерет: инвентаризаци пынă пирки Шупашкарти тата Канашри складсем çак октябрь уйăхĕн 3-мĕш числиччен ĕçлемеççĕ, хупă пулаççĕ.

ЧĂВАШМЕЛЬТРЕСТА бухгалтер-ревизор, статистик-управделами, инженер-химик кирлĕ, çавăн пекех тата районсенче ĕçлеме армансен старши бухгалтерĕсем кирлĕ.

Шупашкарти арманта ĕçлеме рабочи-выборщиксем тата грузчиксем кирлĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Урицкого, 15, Чувашмельтрест.

2—1.

ÇУЛЙĔР ИНСТИТУЧĔСЕМПЕ ТЕХНИКУМĔСЕМ

пĕрремĕш курса вĕренме халĕ те илеççĕ.

Çулйĕр институтне 10-мĕш класран вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекенсене, çулйĕр техникумĕсене 7-мĕш класран вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекенсене илеççĕ.

Çулйĕр институчĕсем çак хуласенче пур: Саратовра, Омскра, Мускавра. Çулйĕр техникумĕсем — Свердловскра, Дон çинчи Ростовра, Мускавра.

Вĕренме кĕмелли условисем çинчен тĕплĕн çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Чебоксары, ул. Калинина, 51, Отдел кадров Управления строительства ГШО НКВД СССР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. 6. 53 88 п. л.

НТ 1839